# Музей— 5 çулта

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Раççей халăх артисчĕн, çĕршывăн Патшалăх премийĕн лауреачĕн, ЧР чи паллă композиторĕсенчен пĕрин, 900 ытла юрă авторĕн Филипп Миронович Лукин ячĕпе Чатукассинче уçнă музей 5 çул тултарчĕ. Çак тапхăрта музея 7 пин ытла çын пырса курнă. Музей канашĕ хайĕн ĕçне, ĕç коллективĕсене явăçтарса, планпа туса пыма тăрăшать. Тĕллев — музыка пĕлтерĕшне çĕклес, чăваш халăх, Ф. Лукин тата ентеш-композиторсен юррисене халăх хушшине сарас тĕлĕшпе малалла ĕçлесе пырасси. Çулленех эпир икĕ хутчен —пĕрре асăну касĕ тата çуралнă кунĕ ячĕпе концертсем йĕркелеме. Унта республикăри культура деятелĕсем, поэтсем, артистсем хутшăнна. Çаван пекех икĕ хутчен Ф. Лукин ячĕпе ирттернĕ вокалистсен конкурсĕн çĕнтерÿçисем ялти культура çуртĕнче пысăк концертсем кăтартрĕç. Вăл малашне икĕ çулта пĕрре иртмелле.

Нумай поэтсемпе композиторсем — музейăн кĕтнĕ хăнисем. А. Кипеч, Г. Ефимов, В. Давыдов-Анатри поэтсем, А. Васильев, Ю. Васильев, Ю. Кудаков, Н. Зимин, ытти композиторсем концертсемпе тĕл пулусене час-часах хутшăнаççĕ. Район администрацийĕн ертÿçисем, культура ĕçченĕсем, Чăваш халăх поэчĕ Ю. Сементер музей ĕçĕнче пысăк пулăшу параççĕ. Ф. Лукин ятне çÿлте тытса пырас енĕпе хайсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăваççĕ. Музей ĕçне йĕркелес, унăн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес çĕрте Чăваш наци музейĕ, унăн ертÿçисем Э. Бахмисов, В. Шляхина, ытти сотрудниксем нумай вăй хураççĕ.

Музей канашĕ Ф. Лукин музейĕн тепĕр пайне —«Ф. Лукинăн пĕчĕк тăван çĕршывĕ» тăвас енĕпе ĕçлесе пырать. Ун валли чылай материалсемпе экспонатсем пухса хатĕрленĕ. Анчах ку енĕпе тумалли те чылай. Ноябрь уйăхĕнче республикăри музей ĕçченĕсен семинарне Ф. Лукин музейĕнче ирттерме палăртнă.

Çитес çул Ф. Лукин композитор çуралнăранпа 90 çул тултарать. Пирĕн тĕп задача: юбилея тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илесси. Ку енĕпе районта та, республикăра та мероприятисен планне туса хатĕрленĕ.

Тата çакна палăртасшăн. Пире музей ĕçĕнче Ф. Лукин хĕрĕ — Татьяна Филипповна кирлĕ пулăшу парса пулăшать, композитор тăванĕ В. Н. Лукин та музей ĕçĕпе кăсăкланать. Тавах вĕсене.

**Н. МАТВЕЕВ.**
музей директорĕ.